Выльăх пăхакансен пĕрлехи кунĕнчен

Тимлĕх пур çĕрте те пĕр пек мар

Сĕт – кулленхи укçа çăл куçĕ. Паян вара районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче кашни ĕне пуçне вăтамран 11,6 килограмм сĕт сăваççĕ. Ку вăл иртнĕ çулхи шайрах. Чи пысăк сăвăм Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче: 15,8 кг. «Герой», «Ударник», «Оринино» хуçалăхсенче те ĕне пуçне 15,0 – 12,8 кг сĕт суни – ĕнесене улăха кăларнă самантшăн лайăх кăтарту. Çак тапхăрта районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕ епле пулнине иртнĕ эрнере иртнĕ выльăх пăхакансен пĕрлехи кунĕ лайăх кăтартса пачĕ. Ăна пĕтĕмлетме калаçава район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-экспертне (зоотехникне) Татьяна Александровна АЛЕКСЕЕВАНА чĕнтĕмĕр.

– Ĕне сĕчĕ чĕлхи çинче тесе калани çĕнĕлĕх мар пулсан та, çак чăнлăха час-часах вырăна хуманни сăвăм çинче палăрать. Акă кăçалхи 4 уйăхра район чĕрĕ виçепе 831,3 тонна (105,3 процент) аш-какай реализациленĕ пулсан, сĕт производстви 3507,9 тонна (82,2 процент) çеç пулчĕ. Пĕр ĕне пуçне вăтамран 1237 килограмм сĕт суни пĕлтĕрхинчен 44 кг пĕчĕкрех. Сăвăм уйрăмах пĕчĕккисен шутне «Рассвет», «Сеятель», К. Иванов яч.хис., «Хлебороб», «Передовик» хуçалăхсем кĕреççĕ. Çакăн сăлтавĕсем: выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçе ăпăх йĕркелени, специалистсем çитменни, выльăх пăхакансем çукки, тулăх рационпа апатлантарманни тата çакна валли тырăпа ытти апатсем пулманни.

Паян обществăлла выльăха улăх-çарана кăларасси пырать. Кунта пĕр пулăм çинче чарăнса тăрас килет. Ыраш калчи. Хĕл каçнă ĕнесемшĕн çакă пысăк энергетикăллă апат пулнине пурте пĕлетпĕр, анчах... Выльăхсен ӳт хушаслăхне ӳстерме, сăвăма хăпартма пулăшакан çак çултан нумайăшĕ пăрăнни – каялла илсе каякан çул пуçламăшĕ. Кăçал ĕнесем валли ыраш калчине «Ударник» (100 гектар ытла уйăрчĕç) тата Суворов яч. хис. (15 гектар) хуçалăхсенче çеç уйăрса хăварнă. Йӳçкассисем çак паха апатпа çу уйăхĕн пуçламăшĕнчех усă курма пуçларĕç. Маларахри çулсенче выльăхсене çава ыраш калчи урлă кăларма хуçалăхсенче ăна ятарласа акни, «симĕс конвеера» пусă çаврăнăшне кĕртни пысăк пĕлтерĕшлĕччĕ пулсан, паян çавна мантăмăр пулас. Выльăхсене улăх-çарана кăларатпăр пулин те, хăш-пĕр çĕрте кĕтӳссен ĕç условийĕсене пăхса тухса çирĕплетмен.

Выльăхсене улăх-çарана кăларнипе пĕрлех малалла пăхакан хуçалăхсенче сарайсене юсас, витесене шуратас тата дезинфекцилес, фермăсене çитес хĕле хатĕрлес ĕçсем пуçланчĕç. Дезинфекцилес тата шуратас ĕçсене «Ударник» хуçалăхăн Йӳçкассинчи, Вăрманкассинчи, «Свобода» хуçалăхăн Кашмашри сĕт фермисенче туса ирттерчĕç те ĕнтĕ.

Ыранхи кунпа пурăнакансем çанă тавăрса ĕçлеççĕ пулсан, «Хлебороб», «Рассвет», К. Иванов яч. хис. хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăхсемпе сыснасен кĕтĕвĕсене пăхассипе, Чапаев яч. хис., «ВТМ», «Волга» хуçалăхсемпе А. Афанасьев хресчен (фермер) хуçалăхĕнче (Чемейре) сыснасем тытассипе ыйту çивĕч тăрать: концентрациленĕ апатсем çитмеççĕ, тырри хаклă тата вăл çук, ăна туянма çаврăнăшри укçатенкĕ çитсе пымасть. Чылай хушă тислĕк кăларманнипе Чемейĕнче санитари лару-тăрăвĕ питĕ ăпăхса кайнă. Ĕçе механизацилеменрен К. Иванов яч. хис., Чкалов яч. хис., «Агро-Урожай», «ВТМ», «Волга» хуçалăхсемпе А. Афанасьев КФХра (Чемей) тислĕке компьютеризаци ĕмĕрĕнче алăпа кăлараççĕ. Нумай фермăра тислĕке ферма территорийĕнчех купаласа хураççĕ те хăйсем патĕнчи ветеринарипе санитари лару-тăрăвне ăпăхлатаççĕ. Хуçалăх ертӳçисен, вырăнсенчи зооветспециалистсен фермăсем çывăхĕнче пуçтарăннă тислĕке çуллахи вăхăтра уй-хире кăларассипе тимлесчĕ. Çак ĕçе ырана хăварманни производство ӳсĕмĕ çинче палăрĕ.

Ферма ĕçченĕсен пĕрлехи кунĕнче тупса палăртнă çитменлĕхсене хуçалăхсен ертӳçисем çывăх вăхăтрах пĕтересседе шанатăп. Çакă çитес хĕл пирки шутлани пулĕччĕ. Пукрав инçе тесе алă усса ларас мар.

А. БЕЛОВ
калаçнă.

Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

«Аннене анне тееççĕ...»

«Аннене анне тееççĕ, аннене илме укçи çук. Укçи пулсан-пулмасан та, аннене сутаканĕ çук», – юрлаççĕ чĕрери чи ырă шухăшсемпе сцена çинчи артистсем, кĕрекери тăвансем. Анчах... Пурнăçри çак сăмах пире чылай чух сисчĕвлентерет, çурăм тăрăх сивĕ хăвалать.

Кăçалхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче район сучĕ пăхса тухнă ĕç те никама лăпкăлăхра хăварма пултарас çук. Урăхла епле-ха? Ывăлĕ амăшĕ çине алă çĕкленĕ! Хăйне çутă кун кăтартса кăкăр çитерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă амăшĕн кун-çулне татнă...

Синкерлĕ ĕçе йĕркипе пăхса тухар-ха. 2008 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче 40 çула хăвалакан Лазарь мухмăрла пуçпах ирлесе ыйхăран тăрса выльăхсем пуçтарать. Хыççăн мухмăрла аптăракан амăшĕ ыйтнипе магазина кайса пĕр кĕленче «Водка» эрех тата çăкăр туянса таврăнать. Иртнĕ кун пиччĕшсем ĕçлеме тухса кайнипе паян вĕсем килте амăшĕпе иккĕшех. Унченех «ырă йăлана» кĕнĕ йĕркепе çаксем çур литр пушатаççĕ те вĕсем хушшинче сăмахпа хирĕçӳ пулса иртет. 17 сехет тĕлĕнче Лазарь урама тухса пирус туртса кĕрсен ӳсĕр амăшĕ кухньăра ларнине курать. Хăйне авланманнишĕн сăмахлакан 68 çулхи амăшне 38 çулхи арçын кравать çине йăтса хурать те хăй çывăрма кĕрсе выртать. Каçпа телевизор сассипе вăранса каять те кил хушшине тухать. Унта бетон урайĕнче пуçĕпе юр çинче амăшĕ выртнине курсан, ăна вăл шăнса вилесрен пӳрте туртса кĕрет. Çул çинче хĕрарăм урай картлашкине тата алăк суллисене пуçпа темиçе çапăнать. Ăна зала кĕртсе кравать çине вырттарсан, кăшт телевизор пăхсан, арçын çывăрса каять. Çĕрле вăранать те амăшĕ урайĕнче выртнине курах каять. Ăна вырăн çине илсе хума тытсан, пичĕ çинче юн асăрхать. Краватьпе ун çывăхĕнчи икĕ кресло патĕнче те юн пуррине асăрхасан, тухтăрсем амăшне вăл хĕненĕ тесе ан шутлаччăр тесе, юна шăлса тасатать, амăшне тепре тăратма хăтлансан, вăл чĕрĕ маррине сиссе, васкавлă пулăшу чĕнме кӳршĕне тухса чупать... Кĕçех киле милици сотрудникĕсем килсе кĕреççĕ. Лазарь пĕрремĕш ăнлантарнинчен вăл залта амăшне 2-3 хутчен алăпа пуçран çапнисĕр пуçне нимĕн те астумасть. Амăшне вăл 2007 çулхи кĕркунне пĕрре çапнисĕр пуçне урăх тĕкĕнмен.

Тĕпчев вара пачах урăххине кăтартса пачĕ. Кӳршĕсем тата Мишер ял çыннисем каланă тăрăх, амăшĕпе ывăлĕ час-часах пĕрле эрех ĕçнĕ. Ывăлĕ хăйне çапни тата унпа вăрçни пирки амăшĕ ял çыннисене пĕрре мар каласа панă пулнă. Вăрçă-харçă час-часах укçа ыйтăвĕпе пулса иртнине те ял çыннисем пытармарĕç. Пĕрле эрех ĕçнĕ хыççăн ывăлĕ хăйне час-часах хĕненине те Л. Е. Михайлова пĕрре мар ял çыннисене каланă. Каланă та тепĕр кунне каллех пĕрле эрех ĕçнĕ. Ывăлĕ хăйне хĕнени пирки амăшĕ милиципе пĕлтерме килĕшмен, мĕншĕн тесен вăл ывăлне айăпласран тата ирĕкрен хăтарасран хăранă. Амăшĕн чĕри çав! Темĕнле йывăр пулсан та тӳсет çав вăл. Вĕçне çитичченех чăтать. Çакнашкал лару-тăру хыççăн, инкек çын курман çĕрте пулса иртнĕрен, ун тĕлĕшпе тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тăвасси экспертизăсем урлă пулса иртрĕ.

Судпа медицина эксперчĕ А. Рыбников кăтартнă тăрăх, Л.Е. Михайлова пуç шăмми сăрăннипе тата пуçа юн кайнипе вилнĕ. Экспертиза кăтартăвĕсем çак сурансем картлашка çинчен ӳкнипе тата алăк суллисене çапăннипе пулнине иккĕлентереççĕ. Инкек пулнă вырăнтан хатĕрсем илни тата вĕсене экспертиза туни те Л. Г. Михайлов айăплă пулни пирки калаççĕ: Лазарь тумтирĕсем çинче амăшĕн юн паллисем пур. Çакна Л. Г. Михайлов ăнлантарса пани те çирĕплетет: 2008 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче амăшĕпе черетлĕ пулштух пушатсан вĕсем хушшинче хирĕçӳ сиксе тухать. Вăй питти арçын амăшне пуçран та кĕлеткерен темиçе хутчен çапать. Миçе хутчен çапнă – астумасть, мĕншĕн тесен ӳсĕр пулнă.

Суд йышăнавĕпе çакă çирĕпленчĕ, амăшĕн юнĕ ывăлĕн тумтирĕ çине вăл ăна çапнă вăхăтра лекме пултарнă.

Л. Г. Михайловăн преступленине суд Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 111 статйин 4-мĕш пайĕпе квалификацилерĕ. Тепĕр майлă каласан, çын сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратса юри сиен кӳни тата ăна пула çын сарăмсăр вилсе кайни.

Преступление тĕрĕс хак парса район сучĕ пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Мишер ялĕнче 1970 çулхи августăн 7-мĕшĕнче çуралнă, ниçта те ĕçлемен, унччен судпа айăпланман, çара юрăхлă Лазарь Геннадиевич Михайлова Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 111 статйин 4-мĕш пайĕпе айăпласа çирĕп режимлă юсав колонийĕнче 8 çул ирĕкрен хăтарма приговор кăларчĕ.

М. ТАРАСОВ,
Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсен следователĕ.

Редакци почтинчен

Ӳркенмест

Васкасси ялĕнче пурăнакан Петр Иванович Иванов çамрăк çын мар, 87 çула çитнĕ пулсан та хăйне ватă туймасть. Вăл кашни ирех ĕçе тытăнать. Выльăх-чĕрлĕхсене апат панă хыççăн Чулкаç çырмине тухса утать. Петр Иванович Чулкаç çырмине йывăççем лартма пуçланă. Кунта вăл лартнă хырсем, чăрăшсем тата ытти тĕрлĕрен йывăç сахал мар. Вăл вăрман лартассипе кашни кун тăрăшать. Йывăççене юхан шыв çыранĕсене, çурхи шыв тăпрана юхтарнă вырăнсене лартать. Паянхи куна Петр Иванович 3000 йывăç лартса чĕртнĕ. Лартнипех йывăç чĕрĕлмест. Йывăççене çырмаран шыв йăтса шăварать. Çавăнпах вăл лартнă йывăççем вăй илсе парка çитĕнеççĕ. Нумаях та вăхăт иртмĕ, Петр Иванович йывăççем лартнă вырăн вăрман тăрăхĕ пулĕ.

П. ИВАНОВСКИЙ.

Килти кайăк-кĕшĕк те тимлĕх ыйтать

Ку кăвакал нартлатмасть

Паян пирĕн тăрăхра та ку енĕпе интересленекен çынсем тĕрлĕрен выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк ĕрчетме, ку ĕçре те пирĕн атте-аннесем курман-илтмен технологисене вăй илтерме пуçларĕç. Шутлатăн та, килти хушма хуçалăха аталантарса та пайтах укçа-тенкĕ тума пулать, тĕллевлĕ ĕçлемелле кăна. Çакна ăнланса эпир кăçал килти хушма хуçалăхра ĕрчетме мускус кăвакалне туянтăмăр. Мĕншĕн? Çакăн пирки пулĕ малаллахи калаçу. Вăл вулакансемшĕн те интереслĕ пуласса шанса тăратăп. Тен хăшĕ-пĕри эпир пуçăннă ĕçе малалла тăсĕ? Çĕнĕлĕхсем тупса вĕсене алла илĕ? Кунашкал хуçасем хăйсен опычĕпе райхаçат страницисем урлă паллаштарасса шанатăп.

Малалла кăвакалсем ĕрчетессипе пухăннă хамăн опытпа паллаштарас тетĕп.

Мускус кăвакала усрама кăткăс мар. Çапах ахаль кăвакалсемпе танлаштарсан вĕсен хăш-пĕр уйрăмлăхĕ те пур: мускус кăвакалĕ ытла хăвăрт ӳсмест, 8-9 уйăха çитсен çăмарта тума пуçлать. Вăл хăй лăпкă пулнипе, тӳсĕмлĕхĕпе, юхан шывсăр вырăнта пурăнма пултарнипе те палăрса тăракан кайăк, ăна апат ытла нумай кирлĕ мар. Ку кайăкăн тепĕр палăрăмлă енĕ вăл, мускус кăвакалĕ нартлатманни, чашкăракан сасă кăна кăларни. Вăл хăракан кайăк пулнине шута илсе, хуçине хăнăхчăр тесе, эпĕ хĕллехи вăхăтра вĕсене час-часах алла илме тăрăшатăп.

Çак кăвакал валли йăвине 60х60х60 сантиметрлă ещĕкрен хатĕрлеме пулать. Пĕр стенинче 25х25 сантиметрлă шăтăк хатĕрлесен ӳпĕнтернĕ ещĕкрен-йăваран кăвакал ирĕклĕнех тула уçăлма тухса çӳреме пултарать.

Кăвакал валли йăва хатĕрленĕ чухнехи хăш-пĕр вăрттăнлăхсем пирки калани те çак ĕçе пуçăнас çыншăн ытлашши пулас çук. Асăннă ещĕке вырнаçтариччен çав вырăна 8-10 сантиметр тарăнăш алтатăп. Нӳрĕк лекесрен тăпра çине хутлатнă пленка, çиелтен типĕ утă е улăм саратăп. Кăвакал каярахпа хăйĕн мамăкне кирлĕ чухлĕ пухса йăвине татах та ăшăрах тăвать. Кăвакал йăвана вырнаçсан, ун патне пымалла пулса тухсан, ялан лăпкă сасăпа калаçатăп. Çапла канлĕхе хăнăхтарнă кăвакал пусма ларсанах малтанхи 3-4 кун хушшинче уçăлма тухкалать пулсан та, çăмартасене сивĕнсе кайма памасть. Ку вара – пулас ĕç ăнăçлăхĕ.

Кăвакал çăмарта тунă чухнех малашлăх пирки шутламалла. Эпĕ çак вăхăтрах кашни çăмартана номерлетĕп, ятарлă журналта ăна хăш кун илнине паллă тăватăп, шĕвĕр вĕçĕпе аялалла туса йывăç ещĕкре упратăп. Ун пек чух çăмартари сывлăш яланах пуклак вĕçĕнче пулать.

Вăхăт çитсен çăмартасене кăвакал айне хурса парасси те пĕлтерĕшлĕ ĕç. Кашни кăвакал айне 15-17 çăмарта вырнаçать. Кăвакал йăвара 34 кун хушши ларать. Эпĕ сăнанă тăрăх мускус кăвакалĕсене инкубаторта кăларма питĕ ывăр.

Пусма ларнă кăвакала та пăхсах тăмалла. Эпĕ, тĕслĕхрен, вĕсене 7-8 кунта пĕрре çăвăнма май туса паратăп та çăвăннă хыççăн кĕлеткисене шăлса типĕтетĕп. Çакă кăвакала кĕлеткине уçăлтарма тата çăмартари нӳрĕке кирлĕ пек упрама пулăшать.

Хĕл каçма мускус кăвакалсен темиçе açине хăвартăр пулсан, кашнине уйрăм усрамалла, ахальлĕн вăйлăраххисем ыттисене сăхма, амантма пултараççĕ.

Çуркунне вĕçĕнче – çу пуçламăшĕнче çăмартаран тухнă чĕпсене ăшăрах вырăна куçаратăп, вĕсене шупка марганцовка шĕвекĕ паратăп, унтан каллех амăшĕ патне яратăп.

Кăвакал чĕпписем малтанхи 2-3 кунне пачах çимеççĕ темелле. Çавăнпа та вĕсем вăйсăрланасран эпĕ чĕпсене хура тĕслĕ пусма çине тăпăрчă е пиçнĕ çăмарта шурри тĕпретсе паратăп. Чĕпсем çак апата хăвăрт асăрхаççĕ те çиме пуçлаççĕ. Çак ĕçе вĕсене амăшĕ те хăнăхтарать. Халĕ асăннă апата малтанхи 5-7 кун хушшинче кунне 5-6 хут паратăп. Каярахпа чĕпсен рационне сĕтпе нӳретнĕ шурă çăкăр, çемçе курăк хутăшĕ, ытти апат пама тытăнатăп.

Чĕпсен каяшĕ нумай чухне шĕвек пулать, анчах çакăншăн тӳрех пăшăрханма кирлĕ мар. Мускус кăвакалĕсемпе вĕсен чĕпписем валли ятарлă валашкара ĕçмелли шыв яланах пулмалла. Ку вăл шыв кайăкĕн пурнăç тыткăчи. Асăрхама, чĕпсене икĕ эрнерен тин шыв патне яма юрать. Эпĕ вĕсем валли ятарлă бассейн та хатĕрлерĕм.

Чĕпсене пăхасси те пысăк ответлăх ыйтать. Пусса кăларнă хыççăн пĕр уйăхран кăвакал чĕпписен хӳри вĕçĕнче, каярахпа çуначĕсем тĕлĕнче тĕк ӳсме тытăнать. Ку вăхăтра вĕсене уйрăмах пысăк тимлĕх кирлĕ. Çак тĕллевпе чĕпсене вăхăтра тата уйрăмах тулăх тăрантармалла. Унсăрăн вĕсем пĕрпĕрин тĕкне сăхса татма пултараççĕ.

Çак тапхăрта эпĕ ытти апатпа пĕрле рациона чĕрĕ е пĕçĕрнĕ вĕтĕ пулă, аш арманĕпе авăртнă какай, чĕрĕ ăман хушса паратăп. Кăвакалсем умĕнчен вĕтетнĕ пурă (мел), çырма хăйăрĕ нихăçан та тăлмасть.

Лайăх пăхса ӳстернĕ чĕпсем тăватă уйăхран вĕçме те пултараççĕ. Çавăнпа аякка вĕçсе каясран вĕсен çуначĕсен вĕçĕсене хачăпа касмалла.

Чĕрĕ кăвакал ами 3 килограмм, açи 5 килограмм таять. 15-20 кăвакал пĕр сысна тушки чухлĕ аш парать те. Пуснă кăвакал кĕлетки таса пултăр тесен, пуснă кăвакала 15-20 минут кутăн çакса юнне юхма памалла.

Кăвакал какайĕ хăйне евĕрлĕрех тутăллă, çиме аван, çуллă мар, çемçе, илемлĕ тĕслĕ.

Мускус кăвакалĕ пачах чирлемест темелле. Апат та тиркемест. Çавăнпа ăна усрама кăмăл тăвакансен йышĕ çулленех ӳссе пырать.

Альберт КОЛЬЦОВ.
Мăн Сĕнтĕр сали.

Чечек ăстине пĕлме

Сулхăнра аван ӳсеççĕ

Кашни пахчарах хĕвел сахал ӳкекен вырăнсем пулаççĕ. Пахчаçăн вара çав лаптăксене те усăсăр вырттарас килмест. Ун пек çĕрте чечек калчисем ӳстерме пулать-и тата мĕнле чечексем вăл вырăнсене тиркемеççĕ?

Татьяна СВЕШНИКОВА.

Мăн Хураçка ялĕ.

Çĕрпе туллин усă курасси – патшалăх шайĕнче хускатнă ыйту. Ял çыннин килти хуçалăх экономики вара пахчапа тачă çыхăннă. Вулавçăн ыйтăвĕ çине çапла хуравлатпăр:

– Ун пек вырăнсенче чечексем ӳстерни лайăхрах. Сулхăнрах вырăнсене чăтăмлă чечексем вара çаксем: упа сарри, атăш курăкĕ (папоротник), хоста (функия), тутлă чечек (медуница сахарная), ветреница (апрель уйăхĕнче чечеке ларать), виноград çулçиллĕ ветреница (августра çеçке çурать), дицентра (июнь – август), май уйăхĕнче чечеке ларакан писев курăкĕ (купена многоцветная), лантăш, пӳрнеске курăкĕ (наперстянка пурпурная), апрельте чечеке ларакан пĕвер курăкĕ (печеночница благородная).

Тĕмпе ӳсекенсенчен сулхăнрах вырăнсенче çаксем лайăх çитĕнеççĕ: гортензи тата вейгела.

Хĕвел кăштах кăна лекнĕ çĕрте астильба, шăнкăрав курăкĕ, примула, лилейник, чăмăр чечек (купальница) çитĕнтерме пултаратăр.

Асăннă чечексене пасарсенче тупса илме пулать.